### Сăмах – зоотехника

# Выставкăна хутшăнасси – малашлăх утăмĕ

***Халăх хуçалăхĕнче паян ыранхине пăхса тунă кашни утăм ылтăн пĕрчипех танлашать темелле. Çакна пурте пĕлетпĕр, анчах ăнăçу вăй илтĕр тесе çĕнĕлĕхе тата çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртме тытăнса тăратпăр. Кайран вара хамăр наянлăха пытарма тăрăшса «çӳлтисене» ятланçи тăватпăр: çак хаклава пăхсан, хаксем ӳснишĕн, вĕсем пире майлă марришĕн, ĕç условийĕсем хамăра тивĕçтерменнишĕн пирĕн пĕр айăп та çук. Çав вăхăтрах кӳршĕри хуçалăх аталану çулĕпе пырать, çĕнĕ техникăпа, ытларах продукциллĕ выльăх-чĕрлĕхпе ĕçлет. Ăçта-ха аталанупа юхăнчăк чикки? Çак ыйту çине тулли хурав парать те ĕнтĕ юлашки çулсенче «Чувашское» пĕрлешӳре иртекен ăратлă выльăхсен республикăри куравĕ. Пирĕн район та унăн ĕçĕнчен пĕр çул та юлмарĕ. Кăçал та çакăнта хамăра тивĕçлĕ шайра кăтартма пултарăпăр-и? Çак ыйтуран пуçларăм хамăн калаçăва район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп специалист-эксперчĕпе Татьяна Александровна АЛЕКСЕЕВА зоотехникпа.***

– Малтанах пĕлтерӳллĕ майпа çакна калатăп: кăçал ăратлă выльăхсен выставки «Чувашское» пĕрлешӳре сентябрĕн 10-11-мĕшĕсенче иртет. Унта хутшăнса хамăра тивĕçлĕ енчен кăтартма пирĕн пур майсем те пур. Курава хамăр районти ăратлă выльăхпа чĕпсене кăларса вĕсене сутас ĕçе анлăлатма кăмăллисем те çук мар. Ăратлăхпа ĕçлекенсем тата выльăх-чĕрлĕхпе чăх-чĕп ĕрчетес çул çинчи хуçалăхсем асăннă выставка ĕçне пысăка хурса хаклаççĕ, мĕншĕн тесен шăпах çакăнта вĕсем вăл е ку ăратăн ырă енĕсене курса пулас продуктивлăха планлаççĕ. Ку енпе иртнĕ çулсенчи выставкăсем хыççăн унта хутшăннисем пĕрре те кăмăлсăр пулмарĕç.

**– Ăратлă выльăхпа ĕçлессине «АПКна аталантарасси» наци проекчĕ те малти вырăна кăларать. Апла пулсан кунта ял хуçалăхĕн вăй хумалли, тимлемелли пайтах.**

– Сирĕн шухăшпа килĕшетĕп. «АПКна аталантарасси» наци проекчĕ ял хуçалăхне ырă улшăнусен варкăшне илсе çитерчĕ. Ыранхи куна пăхса ĕçлекен валли паян пур условисем те пур, патшалăх пулăшăвĕ те айккинче тămасть. Анчах нумай шутлатпăр, калаçатпăр, çав хушăрах калаçу сакки çинче ларсах пурнăçран юлнине çывăха та илместпĕр. Çĕннине куллен алла илсе пыракансем вара ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăваççĕ. Вĕсен экономика кăтартăвĕсем те малаллах каяççĕ. Ял хуçалăхĕнчи ӳсĕм çулĕнче ăратлă выльăх çĕнĕ аталану уçать. Çакăнта ĕнтĕ курав тĕллевĕ. Хуçалăхсем ăратлă выльăх ĕрчетес енĕпе мĕнле ĕçленине ыттисене кăтартасси, республикăри ял хуçалăх организацийĕсене ăратлă çамрăк выльăх ытларах сутасси, ăратлă выльăхпа ĕçленинчен продукци нумайрах илесси йăлтах ăратлăхран пуçланать. Çĕнĕ технологисене хальтерех алла илсен пирĕн кашни ĕнерен вăтамран 6 пин килограмм сĕт сума паян пур майсем те çителĕклĕ. Сысна ĕрчетесси тĕнче шайне тухать пулсан, чăх-чĕп отраслĕ пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ ыттисемшĕн тĕслĕх шайĕнче.

**– Камсене курма пултарăпăр эпир кăçал çак выставкăра? Муркашсем хăйсен ятне ямĕç-и?**

– Тĕллевлĕ хатĕрленекенсен ĕçне пăхсан пирĕн хуçалăхсем кăçал та унта пит хĕретмессе шанатăп. Ĕçĕсене кура ăратлă выльăхсен выставкинче кăçал «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕ, «Оринино» тата «Герой», Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕсем, ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свободăпа» Е. Андреев ячĕпе хисепленекен ăратлăх завочĕсем, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики, «Зааинская» ăратлă сĕтлĕ качакасем ĕрчетекен Л. Капирован килти хушма хуçалăхĕ пулаççех тесе шутлатăп. Тата ыттисем те хутшăнасса шанатăп. Вĕсем выставкăна хутшăнса нихăшĕ те Муркаш ен ятне ямĕ, хăйсем РФ Президенчĕ палăртнă «АПКна аталантарасси» наци проектне пурнăçлас ĕçре тивĕçлĕ вырăн йышăннине выставкăна тăратнă выльăхĕсемпе çирĕплетĕ.

Курава пырас текенсен Лапсар çулĕпе кайсан «Заводская» чарăнура анса юлмалла. Выставка сентябрĕн 11-мĕшĕнче 10 сехетре уçăлать.

**А. ПЕТРОВ калаçнă.**

### Килти хушма хуçалăх

# Кишĕр мĕншĕн йӳçĕ?

***Кĕр çитнипе пахчаран кăçал акса ӳстернĕ кишĕре кăкласа кĕтĕм. Анчах вăл йӳçĕ. Мĕнре-ши вăрттăнлăхĕ?***

**С. АФАНАСЬЕВА.**

***Вулавçă ыйтăвĕ çине А. СЕМЕНОВА хуравлама ыйтрăмăр.***

– Кун пекки пулать. Тепĕр чухне пăхма чипер кишĕрех йӳçек тутăллă пулать. Çакă унăн çӳлти пайĕ ӳснĕ чух тăпраран тухса тăнипе çутă çинче симĕсленнипе çыхăннă. Çавăн пек çимĕçре соланин текен наркăмăш пухăнать. Упранă вăхăтра вăл кишĕре сăрхăнса кĕрет, йӳçек тутă кĕртет. Çавăнпа та ӳснĕ тапхăрта тымар çимĕçе кăпкалатса, купаласа тăмалла. Апла май килмерĕ пулсан, вăл вырăна кĕркунне касса пăрахмалла. Çав вырăн каярахпа чиперех ӳт илет. Ăна ыхра шĕвекĕпе сăтăрнă хыççăн çимĕçе упрамашкăн хума юрать.

### Вулакан пултарулăхĕ

# Ӳс, çĕклен, Муркашăмăр!

Чăваш Енри ентешсем
Манран ыйтсан: «Ăçтисем?»
Тӳрех калап: «Муркашсем!
Эпир Шурча тăрăхсем!»
Ишлей район çыннисем
Хаяр вăрçă çулĕнче,
Хĕрĕх тăваттăмĕшĕнче,
Кĕнĕ Муркаш районне.
Çӳлте тунă та канаш
Пĕтĕмлетнĕ – пĕрлешес.
Йĕркеленнĕшĕн Муркаш
Паян кун уншăн хавас!
Йывăр пулнă пурăнăç,
Пĕрлĕхре кур – çăлăнăç.
Çĕнĕрен йĕрке тума,
Ура çине тăратма
Вăл вăхăтри ĕçченсен
Ĕçĕ кайман алăран.
Куç кĕретех кашни кун
Тапса тăнă вĕри юн.
Пĕчĕк, вăйсăр колхозсем
МТСа пăхăннă.
Лаша, вăкăр вăйĕпе
Малтан мала туртăннă.
Акман çĕр пĕртте пулман,
Çынсенчен кая юлман.
Чăтнă, пĕртте кулянман –
Муркашсем ята яман.

Ĕçне кура – ӳсĕмсем,
Тулăх пурнăç вăйĕсем:
Улăпла комбайнсем,
Тракторсем, машинăсем...
Колхоз-совхоз паркĕсем
Кĕр! кĕрлесе тăраççĕ.
Выльăх-чĕрлĕх витисем
Завод евĕр курнаççĕ.
Шкулĕсем, больницăсем,
Тĕрлĕ ĕçсен çурчĕсем,
Хăтлă кану керменсем –
Пурте пулчĕç çĕннисем.
Ăслă-тăнлă çамрăксем
Ӳссе çӳле çĕкленчĕç.
Кам пĕлмест, халĕ вĕсем
Мухтав ĕç паттăрĕсем.
Чуппипе чупать кун-çул,
Хыçра утмăл пилĕк çул.
Чечекре – Муркашăмăр!
Янăратăр юррăмăр!
Çĕр ĕçченĕн туйăмне
Поэт çырнă сăввине.
Астумастăп авторне –
Шăрçалам тĕп шухăшне:
– Çĕр пултарнă этеме,
Вăй-хăвачĕ пирĕнте.
Ун сĕткенĕпе чĕре
Тапса тăрать ĕмĕрпе.

Атте-анне тунине,
Юнпа çĕнсе илнине
Манас марччĕ çĕр çинче –
Тăрантарать Çĕр-анне.
Чухлать-пĕлет эс камне,
Туптать санăн ăс-тăнне.
Çаврăнтарать хăй енне,
Савăнтарать хуçине.
Вула çыру йĕркине,
Тăрă çăл куç юхăмне.
Тăнла пурнăç тытăмне,
Çĕр вăл чăнах кирлине.
Çирĕп утăм ту мала –
Çивĕч тĕллев тытмалла.
Тĕрĕс çулпа утмалла –
Çĕршыва пулăшмалла.
Самана улшăннăран,
Укçа малта пулнăран,
Ан сутăн эс укçалла,
Кил вучах упрамалла.
Тăван кĕтес сыхлама
Ырă яту юлмалла.
Мĕн пуррийĕ упранма
Йăхран йăха куçмалла.
Эсĕ чăн пурнăç калчи!
Пĕлсе тăр, Муркаш ачи!
Ӳс, çĕклен, Муркашăмăр!
Раççейри чăвашăмăр!

**С. ТИМОФЕЕВА, ĕç ветеранĕ.**

Шурча сали.

### Пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕсем кашнине пырса тивеççĕ

# Çĕнĕ саккун вăя кĕчĕ: тимлĕх ӳсмелле

***Пушар хăрушлăхĕ паянхи çĕнĕ пулăм мар. Çавăнпа та ун çине çиелтен пăхакансемпе килĕшме çук, килĕшес те килмест. Лăпкă вырăнта пурăннине пăхмасăрах, пирĕнтен кашнинех вăл е ку асăрханусăрлăха пула самантлăха тимлĕхе çухатни каялла таврăма çук çухатусем патне çитерет. Çынсем хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни, вĕсем çав правилăсене сĕмсĕррĕн пăсни çине эпир пӳрне витĕр пăхни «хĕрлĕ автан» тухассипе хăратса-шиклентерсе тăрать. Çак пулăм пирĕн патăмăрта çеç мар, Раççей Федерацийĕнче те малти вырăнта. Ăна ура хураспĕтерес тĕллевпех çĕршывра 1994 çулта «Пушар хăрушсăрлăхĕ çинчен» Федераллă Саккун вăя кĕчĕ. Кăçалхи çу уйăхĕнчен вара Раççейре «Пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕсен техника регламенчĕ çинчен» федераллă саккун ĕçлеме пуçларĕ. Мĕн шутлатьха Муркаш енри пушар хăрушсăрлăхĕн паянхи пурнăçĕ тата унăн çĕнĕ условисенчи аталанăвĕпе Муркаш енри пушар хуралĕн малашлăхĕ пирки патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн ертӳçи Илья Николаевич СМИРНОВ? Районти кашни çыннах пырса тивекен çак ыйтуран пуçларăмăр та эпир хамăрăн паянхи калаçăва.***

– Сирĕн ыйтăвăр çине кĕскен хуравлама çук. Калаçмалли нумай, чылайăшне хумхантаракан тата татса паман ыйтусем те самай. Май килнипе усă курса малтанах районти пушар хуралĕнче паян ĕçлекенсене тата çак службăна пĕрремĕш кунран аталантарнă ĕç ветеранĕсене, район çыннисене иртнĕ çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе паллаштарас тетĕп. Вĕсем кашни çынра ырă шанчăкпа çĕнĕ тĕллевсем çуратма тивĕç.

«Пушар хыççăн шыв кирлĕ мар», – теççĕ халăхра. Çакăнпа инкек ума тăрсан кашниех килĕшетпĕр, анчах унччен... 2008 çулта район территорийĕнче пушар тухасси унчченхи çулхинчен палăрмаллах чакрĕ. Кунта хамăр ĕçĕмĕрпе пĕрлех ял çыннисем те, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе вырăнсенчи депутатсем те, ĕç вырăнĕсенчи ответлă специалистсем те пушар хăрушсăрлăхĕ çине тимлĕрех пăхма пуçлани курăнать. Çакă пĕр кунхи тивĕç çеç пулмалла мар. Пушар хăрушсăрлăхĕпе вырăнсенчи лару-тăрăва лайăхлатасси – пĕрлехи тата кулленхи ĕç. Çакăнта ял старостисемпе вырăнсенчи депутатсен, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен пĕрле пулса пире туллинрех явăçтарса халăхпа вăхăтра ăнлантару ĕçĕсем туса иртермелле. Пушара сӳнтериччен ăна асăрхаттарма çăмăлрах. Пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнни тата инкек пирки пушар хуралне вăхăтра пĕлтерме пултарни çухатусене пĕчĕклетет кăна.

**– Ăнланмалла, анчах çĕнĕ техника регламенчĕн тĕллевĕпе актуаллăхĕ мĕнре-ха?**

– Техника регламентне пушар хăрушсăрлăхĕнчи патшалăх йĕркелĕвне эффективлăлатма пурнăçа кĕртрĕç. Вăл пурнăçа кĕнипе пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе çыхăннă ĕçсем саккунăн пĕр актĕнчен тухса тăраççĕ. Кунпа пĕрлех регламент пушар хăрушсăрлăхĕпе ытлашши техника чăрмавĕсене сирет. Пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарасси пирки калаçнă чух ку ыйту питех те çивĕч тăрать.

Техника регламенчĕн тĕп задачисем пирки калас пулсан, вĕсем: тĕрлĕ ĕç валли пушар хăрушсăрлăхĕн чи пĕчĕк ыйтăмне çирĕплетни, пушар хăрушлăхне хакламалли механизмсемпе усă курса пушар хăрушсăрлăхĕн норматив системине (гибкое нормирование в области пожарной безопасности) пурнăçа кĕртесси, ирĕклĕ пушар страхланăвĕ.

**– Эсир пушар хăрушлăхне хакламалли механизмсемпе усă курса пушар хăрушсăрлăхĕн норматив системине пурнăçа кĕртесси пирки каларăр. Тĕплĕнрех чарăнса тăма çук-ши ку ыйту çинче?**

– Çĕнĕ йĕрке пурнăçа кĕнипе пурлăх хуçи «хĕрлĕ автанран» сыхланмалли меле хăй суйласа илейрет. Техника регламенчĕпе килĕшӳллĕн вăл е ку объект пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕсене епле тивĕçтернине пушар хăрушсăрлăх аудичĕ тата патшалăх пушар надзорĕ хак парайраççĕ. Енчен те объект хуçи вăл е ку сăлтава пула пушар хăрушсăрлăх требованийĕсене туллин пурнăçлаймасть пулсан, унăн пушар тухаслăх хăрушлăхĕн виçине палăртмалла. Ку кăтартăвăн вара регламентпа пăхнă виçерен пысăкрах пулмалла мар. Çак ĕçе аудитор фирмисем пурнăçлĕç. Енчен те техника регламенчĕпе çирĕплетнĕ пушар хăрушсăрлăхĕн обязательнăй требованийĕсене пурнăçланă пулсан, пушар тухаслăх хăрушлăхĕн виçине палăртни кирлĕ мар.

**– Мĕн-ха вăл пушар тухаслăх хăрушлăхĕн виçине палăртни?**

– Çĕнĕ саккунпа пурнăçа кĕнĕ çĕнĕ ăнлав ку. Пушар тухаслăх хăрушлăхĕн виçи – вăл е ку объекта пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтересси тата унта ĕçлекенсем пушар вăхăтĕнче хăйсене мĕнле тытмаллине пĕлни, пушар пулăшăвĕ мĕн вăхăтра çитсе инкек тӳсекене чи кĕске вăхăтра (2 минут) эвакуацилеме пултарнине палăртни. Кунта çынсене пушар хăрушсăрлăхĕпе инструктажсем пани, инкек вăхăтĕнче хăйсене епле тытмаллине, мĕн тумаллине вĕрентни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

**– Техника регламенчĕ пушар хăрушсăрлăхне кĕртекен çĕнĕлĕхсем татах пур-и?**

– Çĕнĕлĕхсем пушартан страхланассине те пырса тивеççĕ. Çĕнĕ саккунра вăл е ку объект хуçи пушартан сыхланма пушар хăрушсăрлăх декларацийĕ хатĕрленĕ чух пушарта инкек тӳсекен виççĕмĕш лицосене инкек кӳнĕшĕн ответ тытма ирĕклĕ страховани тăвассине пăхнă.

**– Мĕн-ха вăл пушар хăрушсăрлăх декларацийĕ?**

– Ку вăл регламентпа йышăннă вăл е ку объект пушар хăрушсăрлăхпе килĕшсе тăнине çирĕплетекен çĕнĕлле хак форми. Унта объект хуçи пурнăçлама пулнă пушар хăрушсăрлăхĕн нормативлă докуменчĕсен е пушар тухаслăх хăрушлăхĕн виçисемпе çав виçесене тивĕçлĕ шайра тытмалли мероприятисен перечененĕсем пулаççĕ. Деклараци паракан объект хуçи çав объектра пушар хăрушсăрлăх мероприятийĕсене пурнăçлассишĕн хăйĕн çине яваплăх илет. Декларацие обязательнăй йĕркепе тăвасси шкул çулне çитмен ачасен çурчĕсене, ватăсемпе инвалидсен специализациленĕ çурчĕсене, больницăсемпе шкул-интернатсен тата ача-пăча учрежденийĕсен çывăрмалли корпусĕсене пырса тивет. Кусем пирки пирĕн калаçу малашне татах пулĕ-ха.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

### Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ

# Пĕрлехи тăрăшулăхпа – малалла

Халăхăмăрăн ăслă шухăшĕсем чылай. Вĕсене алла илсе пыни ӳсĕмсен çулĕпе уттарать те. Çакна эпир хамăрăн «Родина» çарпа патриотизм клубĕн ĕçĕнченех курса тăратпăр. Унăн ӳсĕмĕ те пирĕн пĕрлехи ĕç усăсăр иртменни пирки калать. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă май çак клубăн çуралнă кунĕ те унпа çыхăннăран тата ашшĕ-амăшĕсем ыйтнипе паянхи манăн калаçу.

Муркашри вăтам шкулти «Родина» çарпа патриотизм клубĕ – ачасен пуçарăвĕпе йĕркеленнĕ клуб. Ку вăл çапла пулса иртрĕ. Виçĕ çул каялла çуллахи каникулта пирĕн 10-мĕш классем республикăри «Орленок» вăйăсен финалне хутшăнчĕç. 8-мĕш вырăн çеç йышăннипе ачасем çеç çырлахасшăн пулманни, тепĕр çул татах унта хутшăнасшăн пулни палăрчĕ. Анчах «Орленок» условийĕсене кура вĕсем унта хутшăнаймастчĕç ĕнтĕ. Çапах çарпа патриотизм клубĕсем валли çул уçăлчĕ. Çавăн чухне ĕнтĕ ачасем çак çĕнĕлĕх пирки ыйту лартрĕç те. Тĕллевлĕскерсем хăйсен пуçарăвне вĕренӳ çулĕн малтанхи кунĕсенчех вырăнтан тапратрĕç. Сентябрĕн 4-мĕшĕнче ачасемпе пĕр сăмах тупса «Родина» çарпа патриотизм клубĕ йĕркелеме йышăнтăмăр. Уйăх иртсен ăна официаллă майпа уçрăмăр. Вăт çав телейлĕ самантран паян кунччен шăпах виçĕ çул иртсе кайрĕ те ĕнтĕ. Паян ачасене тата вĕрентекенсене çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа саламласа ырă малашлăхсем суннă май хамăр утса тухнă çулсене пĕтĕмлетни те ытлашши пулмĕ.

Иртнĕ виçĕ çул хушшинче ачасем шкул чысне çӳле çĕклессипе ырмиканми ĕçлерĕç. Хăйсем Тăван çĕршывăн шанчăклă хӳтĕлевçисем пуласса ĕçпе кăтартса çак хушăра вĕсем районти «Орленок» вăйăсен программинче виçĕ çулĕнче те малти вырăнсене йышăнчĕç. Çак çитĕнӳсемпе çулленех республикăри вăйăсене хутшăнма ирĕк çĕнсе илчĕç. Тăван çĕршывăн пулас хӳтĕлевçисем республикăра 2007 çулта – пĕрремĕш, 2008 çулта – виççĕмĕш, 2009 çулта пĕрремĕш вырăнсене çĕнсе илчĕç. Çак хушăра пирĕн ачасем 2008 çулта Раççей шайĕнче те «Победа» финалта ăмăртса курчĕç. Унти 42 команда хушшинче 12-мĕш вырăн йышăнни çарпа патриотизм клубĕн малашлăхĕ пуррине кăтартрĕ.

Районта çулленех вĕренӳ çулĕ вăхăтĕнче шкул ачисем хушшинче çарпа прикладной спорт тĕсĕсемпе спартакиада иртет. Унта иртекен 13 конкурс – пирĕн ачасен чи юратнă вăййисем. Çавăнпах «Родина» çарпа патриотизм клубĕ çулленех çĕнтерӳçĕ шутĕнче. Кунпа пĕрлех çулленех пĕчĕк калибрлă винтовкăран перессипе иртекен ăмăртура та пирĕн клуб членĕсем чи маттуррисем. Районта малти вырăна тухса республикăна кайма путевка çĕнсе илекенскерсем виçĕ çул ĕнтĕ унтан çĕнтерӳпе çеç таврăнчĕç. Çакă пирĕн ачасем тĕрĕс çул çинче иккенне çирĕплетсе парать.

Кăçал виççĕмĕш çул республикăра çамрăк моряксен сборне ирттереççĕ. «Родина» çарпа патриотизм клубне çӳрекенсем те унта хутшăнассинчен пăрăнмаççĕ. Пĕлтĕр те, виçĕм çул та унта Муркашсене çитекенни пулмарĕ. Кăçал та вĕренӳ çулĕ пуçланиччен пирĕн ачасем çак ăмăртусене хутшăнма хатĕрленме пуçларĕç. Ăмăртусем сентябрĕн 5-мĕшĕнче иртмелле.

«Родина» çарпа патриотизм клубне çӳрекенсем юлашки çулсенче парашют спорчĕпе интересленме пуçларĕç. Каламалла, çĕнĕ пуçарура та вĕсем пит хĕретмерĕç. Иртнĕ çул 8 ача, кăçал 5 ача парашютпа сикессипе 3-мĕш разряд нормативне пурнăçларĕ.

Куратăр ĕнтĕ, çарпа патриотизм клубĕ пĕр вырăнта тăмасть. Ачасене çак вĕренӳре аслисем пулăшсах пыраççĕ. Çак ĕçре уйрăмах тăрăшуллисене ятранах палăртас килет. Вĕсем: А. Вязов, Л. Николаева предпринимательсем, Муркаш райпо Канашĕн председателĕ Б. Андреев, «Родина» çарпа патриотизм клубĕн канашĕн членĕ тата «Сывлăх» ФСК директорĕ А. Куликов. «Сывлăх» ФСК пирки калас пулсан, республика шайĕнчи ăмăртусенче шывра ишессипе ăмăртма пирĕн ачасем кунта лайăх тренировкăсем ирттереççĕ. Ăна кура ăмăртури кăтартусем те.

Пĕрлехи тăрăшулăх ачасен малашлăх çулĕсене уçать. Пирĕн клуба çӳренĕ ачасенчен 8-шĕ паян çар училищисенче пĕлӳ пухать пулсан, кăçал унта вĕренме кĕнисем – 4 çамрăк. Вĕсемсĕр пуçне икĕ çамрăк Чулхулари ШĔМ академийĕн Шупашкарти филиалĕнче вĕренет. Çак ырă туртăм татах та вăй илессе шанас килет.

**В. ЛЬВОВ, «Родина» çарпа патриотизм клубĕн ертӳçи.**